28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
25
ЭРНЕКУН
99(6850) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

„Комсомольская Правда" хаçат редакцине

Совет çамрăкĕсен боевой органне—«Комсомольская Правда» хаçата—вăл 20 çул тултарнă ятпа саламлатăп.

Мирлĕ строительство çулĕсенче тата Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче «Комсомольская Правда» совет çамрăкĕсене хамăрăн Тăван çĕршывăн пĕтĕм чун-чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентсе тăчĕ.

«Комсомольская Правда» хаçат çитĕнсе пыракан ăрăва малашне те Ленин партине чун-чĕререн парăнса ĕçлеме вĕрентсе тăрас задачăна ăнăçлăн пурнăçлассине, çамрăксене наукăпа культурăн çитĕнĕвĕсене алла илме пулăшассине, çамрăк патриотсен вăйĕсене хамăрăн аслă Тăван çĕршыва малалла аталантарасшăн кĕрешме çĕклессине шансах тăратăп.

И. СТАЛИН.

Çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхне ăнăçлăн ирттерер!

Паян республикăри çулсем çинче хĕрӳллĕ ĕçсен тапхăрĕ пуçланмалла. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ майăн 25-мĕшĕпе июнĕн 15-мĕшĕ хушшинче çулйĕр строительствинче ĕçлемелли çирĕмкунлăх ирттерме йышăнчĕ.

Çирĕмкунлăха ирттерни республика юбилейĕ умĕнхи питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать. Чăваш халăхĕн уявне фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем производство планĕсене ирттерсе тултарнипе, колхозниксем çуракине ăнăçлăн ирттернипе паллă тума хатĕрленеççĕ. Унсăр пуçне ĕççыннисем пирĕн хуласемпе район центрĕсене юсаса йĕркелесе уяв сăн-сăпачĕ кĕртеççĕ. Паллах, республикăри çулсене те уява хатĕрлес пулать: кирлĕ çĕрте вĕсене çĕнĕрен тумалла, юсаса тухмалла, йывăççем лартса илемлетмелле.

Иртнĕ çулсенче пирĕн республика çулйĕр енĕпе малта пыракан республика пулнă. Астăватпăр: «Чăваш республики—кăтартуллă çулйĕр республики» тесе, пирĕн çинчен Мускавра тухакан хаçатсем сахал мар çыратчĕç. Анчах та эпир юлашки çулсенче çак енĕпе ĕçе сӳрĕклетрĕмĕр.

Республика, пĕтĕмĕшпе илсен, çулйĕр ĕçĕсен кăçалхи сезонне çителĕксĕр хатĕрленнĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕпе Совнарком кăтартса панă тăрăх, республикăри çулйĕр Управленин 3.000 кубометр чул, 1500 кубометр вĕтĕ чул, 24.900 кубометр хăйăр, 8.900 кубометр йывăç хатĕрлесе турттармалла пулнă. Анчах та çулйĕр строительствинче кирлĕ нихăш материала та планпа палăртнă чухлĕ хатĕрлемен тата турттарса тухман. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне илсен, чулпа йывăç турттармалли заданисене çуррине яхăн çеç пурнăçа кĕртнĕ, хăйăр 900 кубометр, вĕтĕ чул 200 кубометр кăна турттарса кăларнă. Курăнать ĕнтĕ, плана тултарас пулсан, республикăн татах та 24 пин кубометр хăйăр, пин кубометр ытла вĕтĕ чул турттармалла.

Унсăр пуçне, план тăрăх, республикăра 300 метр тăршшĕ çĕнĕ кĕперсем тумалла, 500 метр тăршшĕ юсамалла пулнă. Май уйăхĕччен 205 метр тăршшĕ çĕнĕрен тунă, 146 метр тăршшĕ юсанă. Çапла вара, кĕперсем тумалли тата юсамалли плана та республика тултарайман.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи çулйĕр Управленийĕ (начальникĕ Галанцев юлташ) республикăра çулйĕр строительствин сезонне хатĕрленес ĕçе çителĕксĕр ертсе пынă. Районсенчи партипе совет организацийĕсем те халăх хуçалăхĕнчи çак кирлĕ ĕçе хакламанни палăрать. Çулйĕр строительствин сезонне хатĕрленмелли плана республикăра пĕр район та тултарман. Ку тĕлĕшпе Хĕрлĕ Чутай, Советски, Октябрьски, Чурачăк тата Куславкка районĕсем уйрăмах юлса пыраççĕ. Вĕсем хăйăр, чул, йывăç тата ытти стройматериалсем хатĕрлесе турттармалли плана кăшт та пурнăçа кĕртмен. Муркаш районĕ те çулйĕр енĕпе начар ĕçлет. Кунти çулсемпе кĕперсем ытла та япăхса кайнă. Апла пулин те, çакă вара райсовет исполкомне нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармасть. Район ĕçлеме пуçланăранпа çулталăк иртрĕ, райсовет исполкомĕнчи çулйĕр пайĕн заведующине халĕ те тупса лартман-ха. Исполком председателĕ Г. Федоров юлташ çулйĕр пайĕн заведующийĕ пулма юрăхлă çын вырăнта тупаймасть, Шупашкартан ярса парасса кĕтет. Çавăн пек кĕтсе пурăннă пиркиех ĕнтĕ Муркаш районĕнче çулсемпе кĕперсене юсас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе ку таринччен нимĕн те туман.

Çулйĕр строительствине малтанах хатĕрленес тĕлĕшпе тата хальхи вăхăтра çулсене юсас тĕлĕшпе Комсомольскипе Елчĕк районĕсем ыттисенчен тимлĕнрех ĕçленине палăртмалла. Вăл районсем çулйĕр строительствине ытти ĕçсемпе пĕр вăхăтрах туса пыма пĕлеççĕ. Комсомольски район çулйĕр ĕçĕпе куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава малашне те хăйĕн аллинчех хăварасса шанма пулать.

Республикăра çулйĕр строительствинче хĕрӳллĕн ĕçлемелли çирĕмкунлăх пуçланчĕ. Çак çирĕмкунлăхра государствăн, республикăн тата районсен мĕнпур çулĕсемпе кĕперĕсене юсаса тухмалла тата çĕнĕрен те тумалла, çулсен хĕррипе йывăççем лартса илемлетмелле, культурăллă йĕрке тумалла. Горькипе Хусан хушшинчи çулăн Управленийĕ тата Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи çулйĕр Управленийĕ çирĕмкунлăх вăхăтĕнче кашни районра мĕн-мĕн тумаллине палăртса план хатĕрленĕ, çав плана кашни районах ярса панă.

Çулйĕр Управленийĕ енĕпе республикăра çĕнĕрен пĕр километр тăршшĕ шоссе çулĕ хывмалла, 1,8 километр тăршшĕ чул сарса, 20 километр тăршшĕ тăпрапа хăйăр купаласа çул тумалла, 844 метр чухлĕ çĕнĕ кĕперсем тумалла, шыв каймалли трубасем хумалла тата ытти те. Унсăр пуçне, чулсем сарса тунă çулсене 8 километр тăршшĕ, тăпрапа хăйăр купаласа тунă çулсене 23,5 километр тата 1270 метр тăршшĕ кĕперсем юсамалла. Кусем вĕсем—вырăнти çулсем çинче тумалли ĕçсем.

Вĕсемсĕр пуçне, государство çулĕсене, çав çулсем çинчи кĕперсене юсас тĕлĕшпе нумай ĕçсем тума палăртнă. Горькипе Хусан хушшинчи мăн çул çинче, сăмахран, 15.200 кубометр чухлĕ çĕр ĕçĕ тумалла. Кунта чылай çĕрте çул хĕрне тăпра йăтса купаламалла, тайлăксене тӳрлетмелле, тăпра юхнă вырăнсене сыхнă çатансем çапса çирĕплетмелле, çеремпе витмелле тата 16.500 тваткал метр чухлĕ çула тепĕр хут сарса тухмалла. Çакăн чухлĕ юсав ĕçĕсене тума 1900 кубометр чул, 1000 кубометр вĕтĕ чул, 1700 кубометр хăйăр тата 300 кубометр йывăç материалсем кирлĕ пулаççĕ.

Çапла вара, республикăра çулсемпе кĕперсене çĕнĕрен тăвас тата юсаса тухас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем нумай. Вĕсене, паллах, срокра—çирĕмкунлăх вăхăтĕнче—тăвас пулать. Çирĕмкунлăх планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси çак ĕçе вырăнсенчи партипе совет организацийĕсем, хуçалăх руководителĕсем мĕнле йĕркелесе ертсе пынинчен, çул çинче ĕçлеме кирлĕ туртăм вăйне çынсене çителĕклĕ парса тăнинчен килет. ВКП(б) Обкомĕпе республика Совнаркомĕ çирĕмкунлăх вăхăтĕнче кашни районран миçе лав, миçе çын ĕçлемеллине палăртнă. Çулйĕр строительствине кашни районăнах ĕçпе туртăм вăйĕ памалла. Уйрăмах Çĕрпӳ, Куславкка, Етĕрне, Сĕнтĕр, Шупашкар, Комсомольски, Канаш тата Елчĕк районĕсен çулйĕр строительствине вăйлăн хутшăнмалла пулать. Ку районсен ĕçпе туртăм вăйне нумайрах уйăрмалла.

Республика юбилейĕ çывхарнă май, çулсене илемлетесси тата вĕсем çинче кăтартуллă йĕрке тăвасси çине хыттăн çаврăнса пăхмалла. Çулсем çине хальтерех йывăççем лартса симĕслетсе тухас пулать. Ку ĕçе комсомолпа пионер организацийĕсем, шкул ачисем активлăн хутшăнни кирлĕ. Унсăр пуçне çулсем çинчи паллăсене, ларса канмаллисене, будкăсене юсамалла, сăрласа илемлетмелле.

Çирĕмкунлăх вăхăтĕнче çулйĕр строительстви ĕçне йĕркелесе ертсе пырас тĕлĕшпе республикăри кашни районпа хуларах штабсем пулаççĕ. Çав штабсене район (хула) Совечĕсен исполком председателĕсем ертсе пымалла.

Паянтан пуçласа республикăри çулйĕрсем çинче çĕршер колхозниксемпе колхозницăсем тата рабочисем ĕçлеме тытăнĕç. ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен çулйĕр строительствин планне срокчен тултарассишĕн вĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса ямалла. Ăмăртура мала тухакан района пама Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обком бюровĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тунă. Çак ялава илме тивĕçлĕ пулассишĕн кашни районăн кĕрешмелле.

Çирĕмкунлăхра тăрăшса ĕçлесе, çулйĕр строительствин планне пĕтĕмпех тултарар, чăваш халăхĕн уявне юсавлă та илемлĕ çулсем тунипе кĕтсе илер!

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăри Слуцкий юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода **виççĕмĕш преми** пама йышăннă.



Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕ тăратнă тăрăх, малта пыракан çак МТС-сене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

7. **Чкаловски МТС** (директорĕ **Архипов** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Быков** юлташ, старши механик **Елагин** юлташ). МТС çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 100,4 процент тултарнă, 6 тоннăна яхăн горючи перекетленĕ.

Çуракинче **Пыркин юлташ ертсе пыракан 9-мĕш трактор бригади уйрăмах** палăрнă, вăл кашни урапаллă трактор пуçне, план тăрăх 90 гектар сухалас вырăнне, 200 гектар сухаланă.

Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, çуракинче тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

СĔНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

36. **«Социализм» колхоз** (председателĕ **Д. И. Игнатьев** юлташ). Колхоз тĕштырăсем акмалли плана 10 ĕç кунĕнче 103 процент тултарнă. Çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне ретĕн-ретĕн акнă.

37. **Партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Александров** юлташ). Колхоз тĕштырăсене лайăх пахалăхпа 11 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем МАЙĂН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне тултарнă (процентпа)
Вăрнар	169,1
Çĕрпӳ	130,2
Куславкка	126,8
Ишлей	122,0
Вăрмар	116,5
Канаш	114,3
Йĕпреç	112,3
Елчĕк	111,0
Шăхасан	108,0
Красноармейски	106,7
Калинино	102,1
Улатăр	100,3
Чкаловски	100,3
Элĕк	85,5
Шупашкар	85,4
Хĕрлĕ Чутай	84,1
Тăвай	81,9
Сĕнтĕр	80,5
Комсомольски	78,1
Сĕнтĕрвăрри	75,9
Первомайски	72,9
Çĕмĕрле	72,8
Етĕрне	64,3
Сурмайдан	63,1
Кувакино	61,3
Октябрьски	52,3
Пăрачкав	49,4
Сиява	46,4
Шăмăршă	41,5

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Машинно-тракторнăй станцисен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕнче иртнĕ çулта Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар МТС-ĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана вăл 130 процент тултарнă, 10 тонна горючи перекетленĕ, трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне 20 процент чакарнă.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. А. Бенедиктов юлташ Вăрнар МТС-ĕн чи лайăх работникĕсене значоксемпе наградăланă. Çак МТС-ăн механикне П. Е. Николаев юлташа тракторсемпе ытти машинăсене лайăх ĕçлеттернĕшĕн тата сыхласа усрама техника енчен юсавлă панăшăн «Отличный механик МТС» текен значокпа наградăланă.

МТС-ăн 7 бригадирне «Отличный бригадир тракторной бригады МТС» текен значоксемпе наградăланă. Çак значокпа наградăланисем хушшинче Петр Тойдеряков бригадир пур. Унăн бригади сезонра çулталăкри плана икĕ хут ирттерсе тултарнă, 2042 килограмм горючи перекетленĕ.

Комбайнпа тырпул пухас ĕçре чапа тухнă 5 комбайнера «Лучший комбайнер МТС» текен значок панă. Вĕсен хушшинче Василий Александровпа Кузьма Михайлов пур, вĕсем хăйсен заданине 265—280 процент тултарнă.

«Лучший тракторист МТС» текен значокпа 4 çынна наградăланă, вĕсен шутĕнче Ульяна Перфильева юлташ пур, вăл «СТЗ» маркăллă тракторпа 550 гектар сухаланă, 160 килограмм горючи перекетленĕ.

Муркашпа Красноармейски районсем çуракине вĕçленĕ

Красноармейски районри колхозсем майăн 22-мĕшĕ тĕлне çураки планне 100,1 процент тултарнă. Район план тăрăх 14.070 гектар акмалла пулсан, 14.087 гектар акнă.

Муркаш районĕнчи колхозсем те çураки планне 100,9 процент тултарнă. План тăрăх 12.078 гектар акмалла пулнă, майăн 23-мĕшĕ тĕлне 12.201 гектар акнă.

18 колхоз çуракине вĕçленĕ

Шăмăршă районĕнчи колхозсем майăн 23-мĕшĕ тĕлне çураки планне 85 процента яхăн тултарнă. Районри 18 колхоз çураки ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ. Вĕсен шутĕнче иртнĕ çулсенче юлса пынă: «Юлташ», «Родина», «Заря свободы», «Маяк революции», Чапаев, Сталин ячĕсемпе тăракан колхозсем те пур. Çуракине вĕçленĕ колхозсем юлса пыракансене туртăм вăйĕ ярса пулăшаççĕ.

ХĔРӲ ĔÇ ВĂХĂТĔНЧЕ ХИРТЕ ПУЛМАЛЛА

Красноармейски районри «Комбайн» колхоз кăçал районри ытти колхозсенчен маларах тĕштырăсем акса пĕтерчĕ. Çураки ăнăçлă иртни, чăн малтанах, çак ĕçе пур колхозниксене те мобилизацилеме пĕлнинчен, пĕтĕм ĕçе уйрăм сдельщинăпа тунинчен тата колхоз правлени членĕсем ĕçе хăйсем те хутшăннинчен килнĕ. Сăмахран, çураки вăхăтĕнче «Комбайн» колхоз председателĕ Галкин юлташ хиртен яла сайра хутран çеç таврăннă, колхозниксемпе колхозницăсене ĕçре пулăшса пынă. Колхозниксем çакăн пек тĕслĕхсем çинчен каласа параççĕ. Сухаçă Л. Тихонова юлташăн плуг хысĕ çĕкленсе пынă, тарăн каяйман, час-часах шăйрăксем хăварнă. Тихонова юлташ нумайччен асапланнă, анчах плуга юсайман. Колхоз председателĕ Галкин юлташ пынă та часах плугне юсаса панă. Çавăн хыççăн Тихонова сухаçă нормăран ирттерсе сухаланă.

Малтанхи кунах сеялкăна йăнăш лартнине пула, пĕр гектар çине 2,10 центнер тулă акнă. Çак ситменлĕхе каллех колхоз председателĕ чи малтан сиссе, кирлĕ пек акмалла туса панă. Кунта колхозниксем, бригадăсем пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çураки вăхăтĕнче иккĕмĕш бригада малта пынă.

Çуракипе вĕçленĕ хыççăн Сĕнтерӳ Кунне уявланă, çĕнĕ обязательствăсем илнĕ. Халĕ кунта çĕртме пуссине 200 лав ытла тислĕк кăларнă. Сухалас умĕн тислĕке салатаççĕ. Ун хыççăн çийĕнчех сухалаççĕ.

Кăçал колхозниксем гектартан 15—16 центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Суртыррисене яровизацилесе тата имçампа чӳхесе акнă. Сĕлĕ, вăрлăх участокне акнă тулă, урпа пĕр тикĕс шăтса тухнă. Колхоз çураки ĕçĕсене вĕçленĕ. Халĕ колхозниксем шыв арманĕпе çăм тапакан арман пĕвисене пĕвелеççĕ. Çăм арманĕ иртнĕ çул колхоза 115.000 тенкĕ тупăш панă.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

КАЛЧАСЕМ ЛАЙĂХ ШĂТРĔÇ

Муркаш районĕнчи «Свобода» колхозăн сеялкăпа акнă çурхи тыррисем пĕр харăс тата тикĕс шăтса тухрĕç. Алăпа акнисем пĕр тикĕс шăтаймаççĕ. Çак тĕслĕх сеялкăпа акнин уссине лайăх кăтартса парать.

Агроном Ф. СКВОРЦОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Республикăри промкомбинатсемпе пурăнмалли çуртйĕр хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн апрель уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, районсемпе хуласенчи промысла комбиначĕсен тата пурăнмалли çуртйĕр хуçалăх предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн çак çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, çакна палăртнă:

Республикăри 34 промкомбинатран 18-шĕ кăна мĕнпур продукци туса кăлармалли плана тултарнă, ассортиментсем тăрăх илсен, плана пĕри те тултарайман. Улатăр хулинчи, Шупашкар, Сĕнтĕр тата Канаш районĕсенчи промкомбинатсем продукцие, пĕтĕмĕшпе илсен, планпа пăхнă чухлех туса кăларнă пулин те, плана уйрăмăн нихăш продукци енĕпе те тултарман. Вырăнти Промышленность Халăх Комиссарĕ Егоров юлташ тата район (хула) Совечĕсен исполком председателĕсем промкомбинатсем мĕнле ĕçленипе тĕрĕслесе тăман, плана тултарас енĕпе вĕсене пулăшу паман.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çапла йышăннă:

Промкомбинатсен апрель уйăхĕнчи ĕçĕсем тăрăх Совнаркомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата пĕрремĕш премие никама та парас мар.

Вăрмар районĕнчи промкомбината (управляющийĕ Авдеев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Биктимиров юлташ), мĕнпур продукци туса кăлармалли плана 181 процент, ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 193,5 процент тултарнăскере, иккĕмĕш преми—5 пин тенкĕ памалла тунă.

Советски, Çĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенчи, Шупашкар хулинчи тата Япташ ялĕнчи (Сĕнтĕрвăрри районĕ) промкомбинатсем апрель уйăхĕнче начар ĕçленĕ.

Пурăнмалли çуртйĕр хуçалăх предприятийĕсем енĕпе:

Канашри Колхозник çурчĕ (заведующийĕ Петров юлташ) мала тухнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне, Шупашкарти гостиницăран илсе, Канашри Колхозник çуртне пама тата ăна 5 пин тенкĕ укçа парса премилеме йышăннă.

Улатăрти гостиницăна (директорĕ Минеева юлташ)—3 пин тенкĕ, **Етĕрнери коммунальнăй мунчана**—3 пин тенкĕ премии памалла тунă.

Апрель уйăхĕнче Улатăрти, Çĕмĕрлери коммунальнăй мунчасем тата Çĕрпӳри гостиница начар ĕçленĕ.

Вăрман промышленноçĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ Чăваш республикинчи вăрман работникĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем! Пирĕн çĕршыв савăнăçлă вăхăтра пурăнать. Совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçи гитлерла Германие пĕтĕмпех çĕнтернипе вĕçленчĕ.

Фашистла çаратуçăсем пирĕн ирĕклĕ çĕршыва пĕтересшĕн, совет халăхне чура тăвасшăн пулнă. Анчах та совет халăхĕ тăшмана аркатса тăкасса, çĕнтерӳ пирĕн алăра пуласса çирĕп шанса тăчĕ. Совет халăхĕ пирĕн большевиксен партийĕ тата çĕнтерӳ тума хавхалантарса ертсе пыракан Сталин юлташ çине çирĕп шанса тăчĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар фронтра, Сталин ятне асра тытса, шиксĕрлĕхпе паттăрлăх кăтартрĕ, пĕтĕм совет халăхĕ, Сталин ятне асра тытса, тылра хавхаланса ĕçлерĕ, çĕнтерӳ тума пулăшрĕ.

Чăваш республикинчи вăрман промышленноçĕнчи рабочисем, колхозниксемпе колхозницăсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, иртнĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе памалли задание ăнăçлăн тултарчĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Çак ăмăртура уйрăмах Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ палăрчĕ. Вăл хуçалăх, Муркашпа Советски районсенчи колхозниксемпе колхозницăсем пулăшнипе, ВЦСПС-па Главлесоохранăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне икĕ хутчен илме тивĕçлĕ пулчĕ. Чугун çул валли вутă хатĕрлесе памалли плана Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Чурачăк, Шăхасан, Первомайски, Чкаловски тата Вăрмар районĕсем, çавăн пекех вăрмана сыхлакан управленин пур предприятийĕсем те—Вăрнар, Алтышево, Хĕрлĕ Чутай, Канаш тата Кире вăрманпромхозĕсем—ăнăçлăн тултарчĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнче чăн-чăн патриотсем, хăйсен вăйне шеллемесĕр, вăхăта пăхмасăр ĕçлесе, пысăк тухăçлăх кăтартнăскерсем, ӳсрĕç. Алтышево вăрманпромхозĕнче вăрман турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен С. Ф. Егоров юлташ вăрçă çулĕсенче пурĕ 12.000 кубометр вутă турттарса тухнă, сезонри задание 319 процент тултарнă. Лучковăй пăчкăпа вăрман касакансем Н. Т. Тарасов (Тăвай районĕнчи «Заря» колхозран), Г. Я. Героев (Октябрьски районри «Комбайн» колхозран), Н. М. Михайлов (Вăрнар районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозран), вăрман турттаракан В. И. Иванов (Йĕпреç районĕнчи Климов ялĕнчен) тата ытти нумай стахановецсем сезонри заданисене 125 процентран пуçласа 200 процентран тултарчĕç.

Партипе правительство вăрман работникĕсемпе колхозниксен ĕçне пысăка хурса хакларĕç. Чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе памалли плана ăнăçлăн тултарнăшăн пирĕн республикăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç. Çак пысăк та хисеплĕ награда пире—вăрман промышленность работникĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене—чугун çул транспортне топливо, нимĕç оккупанчĕсем аркатнă ялсемпе хуласене, фабрикăсемпе заводсене ура çине тăратма çĕршыва вăрман материалĕсем пĕр чăрмавсăр парса тăрас тĕлĕшпе малашне те вăя шеллемесĕр ĕçлеме хушать.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕ пирĕн республикăна чугун çул транспорчĕ валли—вутăпа шпальник, кăмрăк промышленноçĕ валли—çирĕплетмелли материалсем çуркуннепе çуллахи вăхăтра хатĕрлеме тата турттарма план пачĕ. Çак задание пирĕн пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртес пулать.

Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине тата вăл халăха чĕнсе калани çине ответлесе, вăрман промышленноçĕнче малта пыракансем, колхозниксемпе колхозницăсем, республикăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă ятпа республикăри канашлăва пухăннăскерсем, вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн тата çак обязательствăсене пурнăçлассишĕн Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнма мĕнпур вăрман работникĕсене чĕнеççĕ:

1. Чугун çул транспортне—вутăпа шпальник, кăмрăк промышленноçне—çирĕплетмелли материалсем II-мĕш кварталта хатĕрлесе памалли плана—Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнă тĕле, III-мĕш кварталти плана—тырпулсене пуçтарса кĕртме тухиччен (1945 çулхи июлĕн 15-мĕшĕччен) тултармалла.

2. Обязательствăсене пурнăçа кĕртес тесе, мобилизациленĕ рабочисене пулăшма вăрмана рабочисем, туртăм вăйĕ тата вăрман касмалли инструментсем кирлĕ чухлех хушса памалла, çапла вара плана срокчен тултарса колхозниксене уйхир ĕçĕсем валли хăтармалла.

3. Вăрман хатĕрлевĕнче лучковăй пăчкăпа, электричество тата мотор вăйĕсемпе ĕçлекен пăчкăсемпе анлăн усă курмалла, механизациленĕ тата рационализациленĕ мĕнпур çулсене пĕр чăрмавсăр ĕçлеттермелле, рационализациленĕ çулсене çĕнĕрен тумалла, вăрман турттарнă çĕрте мĕнпур тракторсемпе, автомобильсемпе тата паровозсемпе туллин усă курмалла.

4. Вăрман касас тата турттарас тĕлĕшпе тухăçлă ĕçлекенсен опычĕпе усă курса, вăрман хатĕрлевĕн пур участокĕсенче те ĕç тухăçлăхне ӳстермелле, стахановецсен йышне нумайлатмалла тата кашни рабочин хăйĕн нормине тултармалла.

5. Ĕçри хăрушсăрлăхăн техникине тата сыхланса ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмалла, рабочи аманнă пирки ĕçе пăрахни пĕрре те пулмалла мар.

Чăваш республики 25 çул тултарнине вăрман промышленноçĕнчи çĕнĕ çĕнтерӳсемпе паллă тăвар!

ТРЕТЬЯКОВ ГАЛЛЕРЕЙИНЕ 20.000 ÇЫН ПЫРСА КУРНĂ

Государствăн Третьяков галлерейи тăватă çул хушши ĕçлемен. Ăна халь уçнă. Ăна курма питĕ нумай çын пырать. Иртен пуçласа каçчен залсенче çынсем туллиех пулаççĕ. Майăн 20-мĕшĕнче, вырсарникун, галлерейăна нихăçанхинчен те ытларах çын пырса курнă. Çав кун унта 10.000 çын ытла пынă. Вырăс живописĕн чаплă мастерĕсен картинисене курма Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсем тата боецĕсем, Мускаври предприятисенче ĕçлекен рабочисем, вĕренекенсем пынă. Пынă çынсем хушшинче çамрăксем нумай пулнă.

Виçĕ кун хушшинче Третьяков галлерейине 20.000 çын ытла пырса курнă.

ШКУЛСЕНЧИ ЭКЗАМЕНСЕМ

Лайӑх паллӑсем илеççӗ

КАЛИНИНО. Майӑн 24-мӗшӗ. (Телефонпа). Районра виçӗ вӑтам шкулти X класра пурӗ 46 ача вӗреннӗ. Малтанах начар вӗреннӗ пирки 8 ачапа экзамена кӗртмен. Çапла вара, вӑтам шкул пӗтерсе тухни тата çитӗнсе çитнине кӑтартса паракан аттестат илме 38 вӗренекене экзамен тытма кӗртнӗ.

Юманайри тата Уйкас Юнтапари вӑтам шкултан вӗренсе тухакансем экзамен тытма Калинино вӑтам шкулне пынӑ. Кунта вӗсене лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илнӗ. Экзаменсем вӑхӑтӗнче пурӑнма интернат уçнӑ. Кулленех вӗри апат çитереççӗ. Вӗреннине тепӗр хут пӑхса тухса аса илме уйрӑм класс пур, библиотека яланах уçӑ, дежурнӑй преподавательсем консультацисем пареççӗ.

Вырӑс чӗлхипе сочинени çырни малашнехи экзаменсене татса пачӗ. 38 вӗренекенрен 2 ача «пиллӗк», 10 вӗренекен «тӑваттӑ» паллӑ илчӗç, 17 сочинение «виççӗ» паллӑпа хакланӑ. 9 вӗренекен ку предметпа экзамен параймап. Çапла вара вӗсене малашнехи экзамена кӗртмеççӗ.

Майӑн 23-мӗшӗнче вырӑс чӗлхипе сӑмахпа ыйтса экзамен пулчӗ. Ку экзаменра «виççӗ» палларан кая илекен пулмарӗ, 20 вӗренекен «пиллӗк» тата «тӑваттӑ» паллӑсем илчӗç.

Комисси умӗнче виçӗ шкулта вӗренекенсем экзамен тытни—кашни шкул тата кашни преподаватель хӑйӗн ӗçӗсене мӗнле туса пынине тӗрӗс хаклама май парать. Юманайри вӑтам шкулта вӗренекенсем вырӑс чӗлхине лайӑх пӗлни курӑнать. Ачасем вырӑсла калаçаççӗ, ыйтусем çине хӑвӑрт та тӗрӗс ответ пареççӗ. Шкул директорӗ, вӑлах вырӑс чӗлхин преподавателӗ Ластухина юлташ ачасене тӑрӑшса вӗрентнӗ. Экзамен итогӗсем тӑрӑх, ку шкулта вӗренекенсем пур енӗпе те малта пыраççӗ.

Уйкас Юнтапари вӑтам шкулта вӗренекенсем вырӑс чӗлхине начартарах пӗлеççӗ. Ку шкулта вырӑс чӗлхине вӗрентнӗ Тасаков юлташ ачасемпе экзамента та чӑвашла калаçать, ыйтусем çине тӗплӗн вырӑсла ответ пама ыйтмасть.

Малтанхи экзаменсенче ачасем питех те хумханатчӗç, хӑшпӗрисем вырӑнсӑр шикленни те палӑратчӗ. Халӗ хӑнӑхса çитеççӗ. Хӑйсен пӗлӗвӗсем пирки иккӗленекенсем сахал.

* * *

Шупашкарти хӗрачасен 3-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗнче 7-мӗш класра вӗренекенсем экзаменсене питех те ӑнӑçлӑ пареççӗ. Майӑн 23-мӗшӗнче вырӑс чӗлхипе диктант пулчӗ. Малтанхи экзаменра кунта нумай ачасем лайӑх паллӑсем илнӗ. Çавӑнпа вӗсем питех хумханни, иккӗленни палӑрмасть.

Вырӑс чӗлхипе çырнӑ диктант ачасем ку предмета лайӑх пӗлнине кӑтартса пачӗ. 25 вӗренекенрен 19 ача ӗçне «пиллӗк» тата «тӑваттӑ» паллӑсемпе хакланӑ. Андриянова, Горелова, Мартыненко, Новикова, Раевская тата Соколова вӗренекенсем экзаменӑн иккӗмӗш кунӗнче те «пиллӗк» паллӑ илчӗç.

— Малтанах тӑрӑшса вӗрентӗмӗр. Экзамен пуçланас умӗн мӗн вӗреннине тата тепӗр хутчен тӗрӗслесе аса илтӗмӗр. Халӗ, акӑ, икӗ предметпа «пиллӗк» илтӗмӗр. Ку пире савӑнтарать. Анчах эпир кунпа лӑпланмастпӑр, ытти предметсемпе те унтан кая мар илме тӑрӑшатпӑр,—теççӗ вӗсем.

Н. М.

Экзамен парайман ачасем çук

КӲКЕÇ. Якимовӑри çичӗ çул вӗренмелли шкулта экзаменсем лайӑх иртсе пыраççӗ. Кунта вӗренекенсене экзамена хатӗрленме кирлӗ условисене пурне те туса панӑ. Вӗреннӗ материала тепӗр хут аса илсе çирӗплетме уйрӑм класс пур, библиотекӑран кӗнекесене кирек хӑш вӑхӑтра та илсе вулама пулать. Дежурнӑй учительсем ачасене консультацисем пареççӗ.

Малтанхи экзамена 14 ачаран 9-шӗ лайӑх паллӑсемпе пачӗç, «виççӗ» паллӑран кая илекен пулмарӗ. Тӑваттӑмӗш класра вырӑс чӗлхипе çыру çырчӗç. Кунта çыру ӗçӗсем тӑрӑх «пиллӗк» илекен пулмарӗ. Çапах та хурламалла мар, 8 вӗренекен ӗçне «тӑваттӑ» тата 6 ачан ӗçне «виççӗ» паллӑпа хакланӑ. Экзамен параймап пӗр ача та пулман. Комисси вӗренекенсен ӗçне тӗплӗн тишкерсе, тивӗçлипе хакларӗ.

З. ЕРЛАКОВА.
Районри çутӗç пайӗн шкул инспекторӗ.

Республика 25 çул тултарас умӗн

ЮБИЛЕЕ ХАТӖРЛЕНСЕ

Хӗрлӗ Чутай районӗнчи пахча-çимӗç типӗтекен заводра Чӑваш республики 25 çул тултарнине кӗтсе илме хатӗрленеççӗ. Завод картишне тасатнӑ, 200 тӗп хурӑнпа çӑка йывӑççисем лартнӑ, хӳмесене юсанӑ.

А. НОВИКОВ.

ЭЛЕКТРОСТАНЦИ ТӐВАÇÇӖ

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Искра» колхозӑн икӗ шыв арманӗ пур. Колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх, пӗр арманӗнчен шыв вӑйӗпе ӗçлекен электростанци тума палӑртнӑ. Халӗ электростанци тума 55 кубометр ытла йывӑç касса хатӗрленӗ, ытти оборудованисене те çителӗклӗ таран хатӗрлесе хунӑ. Шыв вӑйӗпе ӗçлекен çак электростанцие Чӑваш республики 25 çул тултарнӑ тӗле туса пӗтерме шутлаççӗ.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Мӑн çула илемлетеççӗ

СӖНТӖР. (Хамӑр корр.). Ярославка ял Советӗнчи колхозсем ялсемпе çулсене илемлетмелли уйӑхлӑха активлӑн хутшӑнчӗç. Кунти 5 колхоз Етӗрнепе Шупашкар хушшинчи мӑн çул çине 14.000 тӗп йывӑç лартнӑ. Çапла вӗсем 1,5 километр тӑршшӗ çула икӗ енӗпе те симӗслетнӗ.

Çак ӗçре «Первая борозда» колхозпа Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем ытларах ӗçленӗ.

Шашкӑпа шахмӑт турнирӗ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Çак кунсенче район центрӗнчи шашкӑпа шахмӑт турнирӗ пулса иртрӗ. Турнира 10 шахматист, 7 шашист хутшӑнчӗ.

Шахмӑтла выляссипе К. Ежеев юлташ 8 очко пухса пӗрремӗш вырӑна йышӑнчӗ. Иккӗмӗш вырӑна 7 очко илсе Т. Григорьев юлташ тухрӗ. 3-мӗшпе 4-мӗш вырӑнсене, 6-шар очко илсе, П. Тихоновпа И. Эзенкин юлташсем пайларӗç.

Великобритани премьер-министрӗ Уинстон Черчилль вырӑнтан тухнӑ

ЛОНДОН, майӑн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Великобритани премьер-министрӗ Уинстон Черчилль вырӑнтан тухнӑ. Премьер ялан пурӑнакан çуртӑн официальнӑй заявленийӗнче çапла каланӑ: майӑн 23-мӗшӗнче кӑнтӑрла Черчилль король патӗнче пулнӑ, вара çавӑн хыççӑн вӑл вырӑнтан тухнӑ. Премьер-министр Черчилль вырӑнтан тухнине пула, Великобританин напи правительстви тек çук ӗнтӗ. Правительствӑри пур вырӑнсем те халӗ пушӑ.

Рейтер агентствин политика корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, çакна шанчӑклӑнах калама пулать: король Черчилле пӗтӗмӗшле суйлав пулса иртиччен (ку суйлав июлӗн 5-мӗшӗччен пулса иртме пултараймасть) çӗршыв ӗçӗсене ертсе пыма «вӑхӑтлӑх» правительство тума хушмалла, мӗншӗн тесен Черчилль общинӑсен хальхи палатинче чи йышлӑ партин пуçлӑхӗ пулса тӑрать. Çак çӗнӗ правительствӑра кам-кам пуласси çак эрне вӗçӗнче кӑна паллӑ пулӗ, анчах та премьер-министрӑн планӗсем ӗнтӗ хатӗр пуль тесе шутлаççӗ, тет корреспондент.

АНГЛИ КОРОЛӖ ЧЕРЧИЛЛЕ ÇӖНӖ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУМА ХУШНӐ

ЛОНДОН, майӑн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, официальнӑй йӗркепе çапла пӗлтернӗ: паян, кӑнтӑрла иртсен, Англи королӗ премьер-министр Уинстон Черчилль вырӑнтан тухнипе килӗшнӗ те ӑна каллех премьер-министр пулма лартнӑ, çӗнӗ правительство тума хушнӑ.

ЛЕЙБОРИСТСЕН ПАРТИЙӖН БЛЭКПУЛ ХУЛИНЧИ КОНФЕРЕНЦИЙӖНЧЕ

БЛЭКПУЛ, майӑн 23-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Ӗнер лейбористсен партийӗн конференцийӗнче ирхи ларура Терберт Моррисон лейбористсен партийӗн политики çинчен калакан декларацие вуласа панӑ. Моррисон çапла каланӑ: çак декларапи вӑл лейбористсен пилӗкçуллӑх программи пулса тӑрать. Индустри политики тӗлӗшпе лейбористсемпе консерваторсем хушшинче пыракан кӗрешӳ акӑ мӗне пырса тивет,—тенӗ вӑл малалла:—пурне те ӗç тупса парассине, финанспа кредит учрежденийӗсене контроллесе тӑрассине тата ялхуçалӑхӗпе çуртйӗр строительствине.

Моррисон мирлӗ кунсенче те, вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи пекех, наци пӑхӑнса ӗçлес шухӑш-кӑмӑлпа принципсене тӗрӗс тытса пыма чӗннӗ, мӗншӗн тесен çапла кӑна çӗршыв умӗнче тӑракан ыйтусене татса пама пулать, тенӗ вӑл. Моррисон ялхуçалӑхне чечеклентерсе ӳстерсе пыма чӗннӗ.

Малалла Моррисон çакна хытӑ асӑрхаттарнӑ: çак программӑна парламентра лейбористсем пуринчен те ытларах пулсан кӑна пурнӑçа кӗртме пулать, тенӗ.

Пренисем пуçланса кайнӑ. Делегат Мур çӗр пирки пыракан политикӑна уçӑрах палӑртса пама сӗннӗ. Унӑн шухӑшӗпе, декларацие «çак ыйтӑва тӗпренех татса памалла» тени çителӗклӗ мар. Çӗре общество тытса тӑмалла (тумалла), çавна ӗнтӗ лейбористсен партийӗн программине кӗртмелле.

Стаффорд Криппс хӑй декларацие пӗтӗмӗшпех ырлани çинчен каланӑ. Криппс малалла çакна хытӑ асӑрхаттарнӑ: лейбористсен партийӗ промышленность тӗлӗшпе наци планне пурнӑçа кӗртнӗ чухне тухса тӑракан йывӑрлӑхсене тивӗçлӗ хак памасӑр хӑварни пулмалла мар, тенӗ. Криппс тата çакна систернӗ: парламентра лейбористсене хирӗç пыракан çынсем ӗçе кансӗрлесе пырас тактикӑпа усӑ курма тӑрӑшӗç, тенӗ.

Ирхи ларура тӗнчери ыйтусем пирки тухса каланӑ делегатсем пурте союзлӑ державӑсем хушшинчи пӗрлӗхе вӑйлатма кирлине кӑтартса панӑ, Совет Союзне хирӗç пропаганда тӑвас хӑрушлӑх пурри çинчен асӑрхаттарнӑ.

Лорд Страболджи хӑйӗн сӑмахӗнче çапла каланӑ: «Пирӗн чи малтанах çакӑн çинчен пурте ӑнланмалла уççӑн каласа парас пулать: эпир хамӑрӑн аслӑ союзникпа—Российӑпа нимӗнле харкашӑва та чӑтма пултараймастпӑр (алӑ çупаççӗ). Германие çӗнтернӗренпе хӑшпӗр хаçат-журналсем тата пире хирӗç пыракан хӑшпӗр çынсем Россия çине шанми тума тӑрӑшаççӗ, çавӑн пек сас-чӗвсем пирӗн конференцире те илтӗнкелерӗç».

Рашхольм округӗнчен пынӑ делегат Хатчинсон хӑйӗн сӑмахӗнче поляксен эмиграцири правительствине хытӑ критикленӗ. Акӑлчансем чӑтса тӑракан çав «правительствӑна» пӗтерсе лартиччен Польша ыйтӑвне килӗшӳллӗ татса пама май пулас çук, тенӗ вӑл. Малалла вӑл çапла каланӑ: «Çав ыйтуран хӑтӑличчен союзниксем яланах пӗр-пӗрин тӗлӗшпе иккӗленсе пурӑнӗç. Поляксен Лондонри реакциллӗ правительствин пӗртен-пӗр тӗллевӗ халӑхсем хушшинчи çыхӑнусене хӑйсен киревсӗр шӑршипе пӑсса тӑрасси пулса тӑрать».

РУМЫНИРИ ВӐРÇӐ ПРЕСТУПНИКӖСЕМ ПИРКИ ЙЫШӐННӐ СУД ПРИГОВОРӖ

БУХАРЕСТ, майӑн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Паян 13 сехетре Румынири 38 вӑрçӑ преступникӗ пирки йышӑннӑ приговора вуласа панӑ. Çавсенчен 29 преступникне суд вӗлермелле тунӑ, вӗсен пӗтӗм пурлӑхне туртса илмелле тунӑ. Вӗсем çаксем: Мачич, Трестиоряну; Никулеску; Ионеску, Балачану, Калотеску, Маринеску, Златеску, Муржеску, Бурадеску, К. Пепеску, Чакир, Финкельштейн, Изопеску, Падуре, Манеску, Крештину, Амбруш, Гинералу, Гавац, Патрашкою, Григореску, Харанга, Соломон, Виленц, Думитреску, Булату, Михайлюк, Ковила. Айӑпланакан Трепедуша ӗмӗрлӗхех каторгӑна ямалла тунӑ.

Айӑпланакан Бобее, Ландауна, Александрескуна, Настасене 5 çуллӑха тӗрмене хупмалла тунӑ, Л. Попескуна — 4 çуллӑха, Хацегануна—2 çуллӑха, Мелинескуна—1 çуллӑха. Айӑпланакан Клинчануна тӳрре кӑларнӑ.

Вӗлермелле тунисем пурте Верховнӑй кассаци судне вӗсен ӗçне пӑхса тухма прошени панӑ. Апелляци сучӗн харарӗ çав ӗç пирки майӑн 25-мӗшӗнче пулмалла.

РУЗВЕЛЬТА ВИЛНӖ ХЫÇÇӐН «ХИСЕП МЕДАЛӖПЕ» НАГРАДӐЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, майӑн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи представительсен палати, пӗр саслӑ пулса, Рузвельт президента вилнӗ хыççӑн Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен чи аслӑ наградипе—«Хисеп медалӗпе» наградӑлама йышӑннӑ.

Германие çӗнтернӗ май Совет Союзӗн Парижри Посольствинче пулса иртнӗ йышӑну

ПАРИЖ, майӑн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Парижра Совет Союзӗн Посольствинче Германие çӗнтернӗ ятпа йышӑну пулса иртнӗ. Йышӑнура çаксем пулнӑ: министр Тиксье, Жакино, Френэ, Лоран, Пароди тата ытти министрсем те, дипломати корпусӗн членӗсем, Консультаци ассамблейин председателӗ Гуэн, коммунистсен партийӗн руководителӗсем Торез, Кашен, Дюкло, Марти, социалистсен партийӗн руководителӗсем Мейер, Венсен, Ориоль, радикал-социалистсен партийӗн руководителӗсем Анксолнес, Бастид, Хирӗç тӑрса кӗрешнӗ Халӑх совечӗн председателӗ Сайян, Ӗçӗн Пӗтӗмӗшле Конфедерацийӗн секретарӗсем Монмуссо, Фрашон, Толле тата ытти çынсем те.

Шубашичпа Массарик Мексика журналистне каласа пани

МЕКСИКО. майӑн 18-мӗшӗ. (ТАСС). (Вӑхӑтра çитереймен). «Эль националь» хаçат хӑйӗн корреспонденчӗ Югославин тата Чехословакин ют çӗршыв министрӗсемпе калаçнине пичетлесе кӑларнӑ. Унта вӗсем çав çӗршывсемпе Совет Союзӗ хушшинчи çыхӑнусем çинчен калаçнӑ.

Югославин ют çӗршыв ӗçӗсен министрӗ Шубашич çапла каланӑ: «ССР Союзӗ Европӑри ирӗклӗ халӑхсем çине мӗнле пӑхнин питӗ уçӑмлӑ политикине хирӗçле хӑйне уйрӑм шухӑшсем пур. «Вӑйпа лартнӑ правительствӑсем» çинчен калаççӗ, анчах ку пӗтӗмпех суя элек пулса тӑрать. Пирӗн правительство та, Чехословаки правительстви те ССР Союзӗ çак икӗ çӗршыври халӑхсене ирӗке кӑларас тесе, вӗсене хӑйӗн çарӗпе пырса кӗриччен тунӑ правительствӑсем пулаççӗ. Тито маршалӑн партизанӗсем Хӗрлӗ Çар Югослави пирки мӗнле те пулин стратегиллӗ плансем йышӑниччченех нимӗçсене хирӗç кӗрешнӗ. Бенеш ертсе пыракан правительство Чехословакин Лондонри правительствиех пулса тӑрать. Пирӗн правительствӑра Югославири коммунистсен партийӗ ытларах вырӑн йышӑнса тӑрать тени те тӗрӗс мар. Эпир ССР Союзӗпе туслӑ пурӑнни, пӗр-пӗрне пулӑшу парасси çинчен договорта палӑртнӑскер, пӗр-пӗрне тивӗçлипе хисеплесе сума сунин никӗсӗ пулса тӑрать. Хӗрлӗ Çар ку уйӑхра Югославирен тухса каять, вӑл Триест портне те тата ирӗклӗ Югославин ытти урӑх хулисене те йышӑнса илмест.

Шубашич шухӑшӗпе, «Сан-Францискора аслӑ державӑсем мирлӗ вӑхӑта тытса тӑрас тӗлӗшпе тата вак çӗршывсене кирек епле агрессирен те сыхласа хӑварас тӗлӗшпе хӑйсем çине çав тери пысӑк ответлӑх илеççӗ. ку ответлӑх ахаль япала мар ӗнтӗ. Россия кама та пулин пӑхӑнса пурӑнакан государствӑсем тӑвасшӑн мар, анчах, паллах, вӑл тӗрлӗ заговорсем тӑвакан государствӑсем пулнипе те килӗшмест. Çакӑ ӗнтӗ вӑл аслӑ ответлӑха пӗлсе тӑни пулать, ӑна урӑхла майлӑ ӑнлантарса пама та юрамасть. Европӑра шанчӑксӑр режим пулма пултараймасть, тесе шутлатпӑр эпир».

Массарик çапла каланӑ: «Хӑшпӗр çынсем Совет Союзӗпе туслӑ пулнине хаярӑн критиклеççӗ. Чӑн та ӗнтӗ, ССР Союзне пирӗн хамӑрӑн государство территорийӗн чылай пысӑк пайне ирӗке кӑларнӑшӑн тав тумалла, кунта Англипе Америка çарӗсем хӑвӑрт малалла куçса пыни те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Пирӗн договор икӗ çӗршыва та хӑйсен ӗçӗсене туса пыма ирӗк парать. Чехословакире ниепле майпа та Совет режимӗ пулма пултараймасть, пирӗн республика формули пирӗн халӑхӑн идеологиллӗ никӗсӗ пулса тӑрать. ССР Союзӗ çине эпир хальхи тата яланхи аслӑ союзник çине пӑхнӑ пек пӑхатпӑр. Эпир Мюнхен вӑхӑтӗнче пирӗн çӗршыв çине вӑл мӗнле пӑхнине манма пултараймастпӑр».

Польшӑпа Совет Союзӗнчи çыхӑнусем пирки Массарик çапла каланӑ: «Эпӗ çапла шутлатӑп: Россия Польшӑра халӑх тӑвас тенӗ пек режим тӑвассисӗр пуçне, анчах çав вӑхӑтрах унта Совет Союзне хирӗçле пропагандӑн центрӗ пулнине пӗтерсе лартассисӗр пуçне, урӑх нимӗн те тӑвасшӑн мар. ССР Союзӗн çак позицине ӗнтӗ ӑнланмалла. Пирӗн Чехословаки халӑхӗ, правительствӑра Совет Союзӗн тӑшманӗсем пулсан, ӑна чӑтса пурӑнаймаи пулӗччӗ».

Лӑпкӑ океан çинчи вӑрçӑ

ЛОНДОН, майӑн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен Лӑпкӑ океанӑн кӑнтӑр-хӗвеланӑç пайӗнчи хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен пӗрлешӳллӗ командованийӗн штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре çапла каланӑ: Америка çарӗсем Филиппин утравӗсен шутӗнче тӑракан Минданао утравӗн вӑтаçӗрти пайӗнче 10 миля, Давао районӗнче—2 миля малалла кайнӑ. Лусон утравӗ çинче Америка çарӗсем Кагаян улӑхӗ патнелле куçса пыраççӗ.

Борнео утравӗ çывӑхӗнчи Таракан ятлӑ утрав çинче Австралипе Голланди патрулӗсем халӗ çав утравӑн çурçӗр хӗррине çитессе 3 миля кӑна тӑрса юлнӑ.

ВАШИНГТОН, майӑн 22-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Лӑпкӑ океан çинчи флочӗн штабӗ çапла пӗлтерет: Окинава утравӗ çинче çав утравӑн тӗп хули пулса тӑракан Наха районӗнче Япони çарӗсем çӗрле вӑйлӑ контратака тунӑ. Анчах та вӗсен атакине сирсе янӑ. Японецсем тата ытти секторсенче виçӗ атака тунӑ, ку атакӑсене те сирсе янӑ. Американецсем икӗ флангра та малалла куçнӑ. Çавӑн пекех вӗсем Наха хулинчен хӗвелтухӑçнелле Сурипе Ионабару витӗр каякан линин вӑтаçӗрӗнче те малалла кайнӑ.

КАНАДА ФЛОЧӖ ЛӐПКӐ ОКЕАН ÇИНЧИ ВӐРÇАРА

ОТТАВА, майӑн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Тинӗс министрӗ Эбботт ӗнер çапла пӗлтернӗ: Канадӑн 60 карапӗ Лӑпкӑ океан çинчи вӑрçа хутшӑнмалла. Вӑл шутра çакӑн пек суднӑсем пулаççӗ: авианосецсем, крейсерсем, ПВО суднисем тата эсминецсемпе фрегатсем. Канада Англирен икӗ авианосец илет, вӗсем Канадӑн чи пысӑк карапӗсем пулаççӗ. Çавӑн пекех тата Канада флочӗ Англирен хӑвӑрт çӳрекен çӗнӗ эсминецсен флотилине илет, вӗсем Канадӑн Лӑпкӑ океан çинче кӗрешекен эсминецсен ушкӑнне кӗмелле. Канада Инçетри хӗвелтухӑçӗнче вӑрçма 36 çӗнӗ фрегат ярать. Эбботт малалла çакна кӑтартса панӑ: Канада флотӗнче ӗçлес текен çынсене ирӗклӗ йӗркепе пухаççӗ.

ДЕНИЦ «ПРАВИТЕЛЬСТВИН» ЧЛЕНӖСЕНЕ ТАТА НИМӖÇСЕН ВЕРХОВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖН ЧЛЕНӖСЕНЕ АРЕСТЛЕНӖ

ЛОНДОН, майӑн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗнчи корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, майӑн 23-мӗшӗнче çав штабра çапла пӗлтернӗ: халь ӗçлесе тӑнӑ Германи правительствин тата нимӗçсен верховнӑй командованийӗн пур членӗсене те, тыткӑна лекнӗ çынсем вырӑнне хурса, хураллама тытӑннӑ. Çапла арестленӗ пуçлӑхсен шутне 300 офицер кӗрет.

ТИССОНА АРЕСТЛЕНИ

ЛОНДОН, майӑн 23-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пӗлтерет: Баварире майӑн 21-мӗшӗнче Словакин пуканелле «премьер-министрне»—Тиссо ятлӑ паллӑ сутӑнчӑка арестленӗ. Унпа пӗрле унӑн «правительствин» виçӗ членне арестленӗ: финанс «министрне» Пружинскне, хуçалӑх «министрне» Медрицкие тата халӑха çутта кӑларас ӗçӗн «министрне» Кочишнӑ.

СССР Наука академийӗн президиумӗ тата Геологипе географи наукисен отделенийӗ вырӑссен чаплӑ ученӑйӗ, СССР Наука академийӗн президиумӗн членӗ академик

АЛЕКСАНДР ЕВГЕНЬЕВИЧ ФЕРСМАН

нумай вӑхӑт хушши чирлесе выртнӑ хыççӑн майӑн 20-мӗшӗнче Сочи хулинче вилсе кайни çинчен тата унӑн çемйипе пӗрле хурланни çинчен пӗлтереççӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çураки планне тултартӑмӑр

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ Тӑван çӗршыври халӑха вӑрçӑ пирӗн çӗнтерӳпе пӗтнӗ ятпа чӗнсе калапипе Красноармейски районри колхозниксемпе колхозницӑсем тулли кӑмӑлпа, пысӑк савӑнӑçпа кӗтсе илчӗç. Сулпуç чӗнсе калапипе хавхаланса, ӗçри хӑвӑртлӑхсене темиçе хут ӳстерчӗç.

Майӑн 9-мӗшӗ хыççӑн районри колхозсен уйхирӗсенче ӗç хӑвӑртлӑхӗ темиçе хут ӳсрӗ. Кашни колхозник чӗринче халӗ хастарлӑх, савӑнӑç вӗресе тӑрать. Суракинче кӑçал иртнӗ çулхинчен лайӑхрах ӗçлерӗç. Иртнӗ çулта та çураки ӗçӗсем кӑçалхипе пӗр вӑхӑтрах пуçланнӑччӗ, анчах кӑçал районри колхозсем тӗштырӑсемпе пӗр çул ӳсекен курӑксене иртнӗ çулхинчен 5 кун маларах акса пӗтерчӗç. План тӑрӑх 10582 гектар тӗштырӑ акмалла пулнӑ пулсан, майӑн 15-мӗшӗ тӗлне 10662 гектар акнӑ, пӗр çул ӳсекен курӑксем акас плана та тултарнӑ.

Кӑçал та, иртнӗ çулхи пекех, коммунистсем ертсе пыракан колхозсем тӗштырӑсене чи малтан акса пӗтерчӗç. Суракинчи пур ӗçсене те сдельщина йӗркипе тупи ӗçӗн пахалӑхне те, хӑвӑртлӑхне те ӳстерчӗ. Байсубино ял Советӗнчи коммунистсем ӗçӗн организаторӗсем пулса тӑнине лайӑх кӑтартса пачӗç. «Красноармеец» (председателӗ Архипов юлташ), «Жнейка» (председателӗ Петров юлташ) колхозсем районра тӗштырӑсене чи малтан, 8—9 кунта акса пӗтерчӗç. Техникӑллӑ культурӑсемпе пахча-çимӗçсене те акрӗç. Игмар ял Советӗнчи «Чувашия» колхоз (председателӗ Мокеев юлташ) тӗштырӑсене 9 кун хушшинче акса пӗтерчӗ. Сухаçӑсем М. Мокеева, М. Кузьмина, М. Орлова куллен 1,50—1,60-шар гектар сухаланӑ. Албахтино ял Советӗнчи «Сила» колхоз председателӗ коммунист А. Павлов юлташ яланах колхоз ӗçне хӑй хутшӑнать, ӗçре пример кӑтартса парать. Вӑл хӑех парторганизаци секретарӗ пулнӑ май, коммунистсене ертсе пынипе пӗрлех, агитациллӗ-массӑллӑ ӗçе те лайӑх туса пырать. «Сила» колхоз тӗштырӑсене 8 кун хушшинче акса пӗтерчӗ. М. Елисова, Е. Максимова, М. Степанова, М. Клементьева сухаçӑсем куллен ӗç нормине 140—150-шар процент тултарса ӗçленӗ.

Хусакасси ял Советӗнчи «Пятилетка» колхозӑн ӗçне те палӑртма тивет. Çак колхоз çуракин малтанхи кунӗсенче агротехникӑна пӑсса ӗçлерӗ. Тырӑсене чӳхемесӗр тата яровизаци тумасӑр акма тытӑнчӗ. Анчах та ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ йӑнӑша çийӗнчех сиссе тӳрлетрӗç. Колхоз çурхи тырӑсене вӑхӑтра акса хӑварма ӗлкӗрчӗ. Колхозри 73 çулхи ватӑ колхозник И. Федоров, чылай çул хушши уйри ӗçе хутшӑнманскер, кӑçал çӗнтерӳпе хавхаланса çӗнӗрен ӗçе тытӑнчӗ. Вӑл кашни кунах 1 гектар вырӑнне 1,6 гектар сухаларӗ. Районри колхозсенче çамрӑксемпе юнашар, ватӑсем те пӗтӗм вӑя хурса ӗçлерӗç.

Красноармейски ял Советӗнчи «Победа» колхоза 60 çултан иртнӗ Елена Матвеевна Трошкина коммунистка ертсе пырать. Ку колхоз çулран-çулах малтисен ретӗнче тӑрать. Çак колхоз тӗштырӑсене 9 кунта акса пӗтерсе, халӗ çӗртме пуссине тислӗк турттарма, ирхи çӗртме тума тытӑннӑ.

Алманч ял Советӗнчи «Правда» колхозра (председателӗ коммунист Степанов юлташ) çурхи тырӑсене пысӑк пахалӑхпа 9 кунта акса пӗтернӗ. Çак колхозри коммунистсем Николаев, Герасимов, Емельянов т. ыт. юлташсем те уйран кӗме пӗлмесӗр ӗçленӗ. Вӗсем колхозниксемпе пӗрле уйхир ӗçӗнче пулнипе пӗрлех, массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗçе те лайӑх туса пынӑ. Çураки вӑхӑтӗнче 12 номер стена хаçачӗ кӑларнӑ. Колхоз халӗ кӑшмансем, пахча-çимӗçсем лартса пӗтернӗ. Акмалли çӗр лаптӑкне темиçе çул усӑсӑр выртакан çырма-çатрасенчи çеремлӗ вырӑнсене пӑсса 3 гектар аслӑлатнӑ. Унта хӑяр, кишӗр акса хӑварнӑ. Колхозра çураки вӑхӑтӗнче столовӑй йӗркеллӗ ӗçленӗ.

Малтанхи кунсенчех хӑшпӗр колхозсенче агротехникӑна пӑсма хӑтланнисем те пулнӑ. «Большевик», «Свобода» колхозсенче ӑшӑх сухалани, акасине каярах хӑварса пыни пулнӑ. Кунсӑр пуçне, сдельщинӑпа ӗçлемен пирки акана вӑрӑма ярас хӑрушлӑх та пулнӑ. Анчах та çак çитменлӗхсем çинчен ВКП(б) райкомӗн бюровӗнче сӳтсе-явса, вӗсене мӗнле тӳрлетмеллине кӑтартса пани хыççӑн, ӗç юсаннӑ. Çапла вара ӗçри çитменлӗхсемпе йӑнӑшсене çийӗнчех тӳрлетсе пынӑ. «Унгастрой», «Сесмер» колхозсенче ӗç хӑвӑртлӑхӗ çителӗксӗр пулчӗ. Ку колхозсене ытти колхозсем пулӑшу панине пула, майӑн 17-мӗшӗ тӗлне вӗсем те тӗштырӑсем акса пӗтерчӗç.

Çураки вӑхӑтӗнче колхозсем вӑкӑрсемпе ӗнесемпе усӑ курчӗç. «Красная звезда» колхозра 6 ӗнепе суха тунӑ çӗрте, 3 ӗнепе вӑрлӑх турттарнӑ çӗрте усӑ курнӑ. «Труженик» колхозри колхозник М. Иванов хӑйӗн ӗнипе куллен 0.55 гектар суха тунӑ. Çавӑн пекех П. Сергеева та вӑкӑрпа кашни кун 0,50 гектар сухаланӑ. Анчах та кун пек тӗслӗхсем çителӗксӗр-ха. Вӑкӑрсемпе ӗнесене кӳлме вӗрентсе вӗсемпе усӑ курас тӗлӗшпе татах та нумай ӗçлемелле.

Районри МТС иртнӗ çулта кашни тракторпа 127,5 гектар сухаласа çураки планне майӑн 16-мӗшӗнче тултарнӑччӗ. Кӑçалхи çуракинче те трактористсем лайӑх ӗçлерӗç. МТС çураки планне майӑн 15-мӗшӗ тӗлне 102 процент ытларах тултарчӗ. Кашни трактор пуçне çак кун тӗлне 95 гектар сухаланӑ.

МТС-ри парторганизаци политикӑллӑ-массӑллӑ ӗçе трактористсем ӗçленӗ çӗрте—уйхирте туса пырать. Кашни бригадӑрах хаçат-журналсем, кӑтарту хӑмисем пур. МТС-ра малта пыракан трактор бригадисем валли куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялав тунӑ. Кашни бригадӑрах агитаторсем, вулавçӑсем ӗçлеççӗ. МТС дирекцийӗпе парторганизаци трактористсемпе бригадӑсем мӗнле ӗçленине кӑтартакан сводкӑсене бригадӑсене ярсах тӑраççӗ. Малтанах П. Владимиров коммунист бригади ыттисенчен каярах юлса пынӑ, унта техника тӗлӗшӗнчен çитменлӗхсем пулнӑ. Владимиров юлташ бригада мӗнле ӗçленине трактористсене каласа панӑ, вара ӗçре чӑн-чӑн ӑмӑрту пуçланса кайнӑ. Бригада майӑн 14-мӗшӗ тӗлне çураки планне 123 процент тултарнӑ, МТС-ра иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ.

6-мӗш бригада кӑçалхи çуракинче кашни трактор пуçне 120 гектар сухаланӑ, 229 килограмм горючи перекетленӗ, çураки планне чи малтан тултарнӑ.

Комсомолецсемпе çамрӑксен бригадисем те çуракинче лайӑх ӗçлерӗç. Николаева бригади майӑн 14-мӗшӗнче хӑйӗн планне 113 процент тултарса, 434 килограмм горючи перекетленӗ. Степанов юлташ бригадинчи Ф. Афанасьева, К. Павлов комсомолецсем çуракинче 69-шар гектар сухаланӑ. Ксения Васильева комсомолка машинӑпа 70 гектар вырӑнне 105 гектар акнӑ. Сидор Михайлов 65 гектар, Матрена Терентьева 47,5 гектар сухаланӑ. Вӗсем иккӗшӗ кӑна 200 килограмм горючи перекетленӗ. Вӗсем хӑйсен сменинче 3,5 гектар вырӑнне 6—7-шер гектар сухаласа пынӑ.

Ку бригадӑра куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялав пур. Вӑл ялава мӗн çураки пуçланнӑранпах Павловпа Афанасьева комсомолецсем хӑйсен аллинче тытса тӑраççӗ.

Ӑста коммунистсем—çавӑнта яланах ӗç ӑнса пырать. МТС-ри 13 бригадӑран 9 бригадӑна коммунистсем ертсе пыраççӗ. Вӗсенчен 6-шӗ çураки планне чи малтан тултарнӑ.

Çураки вӑхӑтӗнче трактористсене А. Павлов, Афанасьев механиксем çийӗнчех пулӑшу парса тӑнӑ. Вӗсем яланах бригадӑсенче пулса, кӑлтӑксене вӑхӑтра юсанӑ. Çапла вара тракторсем ӗçлемесӗр ларман.

Хальхи вӑхӑтра районри парторганизаци умӗнче питӗ те пысӑк задачӑсем тӑраççӗ. МТС-ӑн комбайнсене юсаса пӗтермелле, ирхи çӗртме тума тытӑнмалла. Колхозсенче çумкурӑкӗсемпе тивӗçлипе кӗрешсе, калчасене лайӑх пӑхса çитӗнтерсе, вӑйлӑ тырпул туса илмелле.

Çӗрулмипе пахча-çимӗçсене вӑхӑтра лартса хӑварса, тырпула пухса кӗртме хатӗрленме тытӑнмалла. Тӑван республика 25 çул тултарнӑ уява ӗçри пысӑк çитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗçлемелле.

Н. ГРИГОРЬЕВ.
ВКП(б) Красноармейски райкомӗн секретарӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместителӗн — 2—89, секретарӗн — 4—26, парти пурнӑç пайӗн 3—97, промышленность пайӗн — 3—99, ялхуçалӑх пайӗн — 3—[illegible], издательство конторин — 0—23.

НТ 00121 Типография № 1 Управл... полиграфпромышленности ... СНК ЧАСС. Заказ № 2. Тираж 16.000